...Библиотека имени В. И. Ленина
Отдел Национальной литературы

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
18
ШАМАТКУН
159(6910) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет Союзĕпе Польша хушшинчи Государство чикки çинчен тунă Договора тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе ССР Союзĕпе Польша правительствисем тунă Килĕшĕве алă пусни

Юлашки кунсенче, Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин, Польшăн Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин тата Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин ытти членĕсем Мускавра пулнă вăхăтра, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи государство чикки çинчен Договор тăвас пирки, çавăн пекех тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе Килĕшӳ тăвас пирки калаçусем пулса иртнĕ.

Çав калаçусем питĕ ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ. Августăн 16-мĕшĕнче вара Совет Союзĕпе Польша хушшинчи государство чикки çинчен тунă Договора тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе тунă Килĕшĕве алă пуснă.

Договорпа Килĕшĕве Кремльте СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин алă пуснă.

Договорпа Килĕшĕве алă пуснă чухне ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ И. В. Сталин тата Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин пулнă.

Унсăр пуçне, Договорпа Килĕшĕве алă пуснă чухне Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминдел коллегийĕн членĕ Голунский, ССР Союзĕн Польшăри чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ В. З. Лебедев, Н. Г. Пальгунов, СССР Наркоминделĕн Европăри 4-мĕш Отделĕн Заведующийĕ А. Н. Абрамов.

Договорпа Килĕшĕве алă пуснă чухне Польша Республики енчен çаксем пулнă: Премьер-министрăн Заместителĕ С. Миколайчик господин, Промышленность Министрĕ Г. Минц господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ З. Модзелевский господин, Промышленность Министрĕн Заместителĕ Г. Пружанский, çавăн пекех тата Раадэ, Б. Чайка, В. Матвин господинсем.

Аяларахра Договорпа Килĕшĕвĕн текстне пичетлетпĕр.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Польша Республики Совет Союзĕпе Польша хушшинчи Государство чикки çинчен тунă
ДОГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ тата Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ, ССР Союзĕпе Польша хушшинчи государство чикки тĕлĕшпе тăракан ыйтăва пĕр-пĕрне килĕшӳллĕн те туслăн татса парас тесе, çак Договора тума йышăнчĕç, ăна алă пусма хăйсем енчен çаксене полномочи пачĕç:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ—ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместительне, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне Вячеслав Михайлович Молотова;

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ—Польша Республикин Министрсен Совечĕн Председательне—Эдвард Осубка-Моравскине,

вĕсем вара хăйсен полномочийĕсене пĕр-пĕринпе улăштарса илнĕ хыççăн, çав полномочисем йĕркеллĕ пулнине палăртса, çакăн çинчен калаçса татăлчĕç:

1-МĔШ СТАТЬЯ

Крымри Конференци йышăннă решени тăрăх, ССР Союзĕпе Польша Республики хушшинчи государство чиккине çак Договор çумне хушса кĕртнĕ 1 : 500.000 масштаблă картă çинче кăтартнă «Керзон йĕрĕ» тăрăх, хăшпĕр районра унтан Польшăна усă памалла 5 километртан пуçласа 8 километра çити пăрăнса йышăнас. Кунсăр пуçне, Польшăна çаксене парас:

а) «Керзон йĕрĕнчен» хĕвелтухăçнерех выртакан территорие Хĕвеланăçĕнчи Буг шывĕпе Солоки шывĕ патне çитиччен, Крылов хулинчен кăнтăр еннерехрен Польшăна усă памалла чи нумай 30 километр чухлĕ пăрăнса;

в) Беловежски Пуща территорийĕн Немиров—Яловка участокĕнчи «Керзон йĕрĕнчен» хĕвелтухăç еннерехри пайне, Немиров-Гайновкăна, Беловежа тата Яловкăна кĕртсе, Польшăна усă памалла чи нумай 17 километр чухлĕ пăрăнса.

2-МĔШ СТАТЬЯ

1-мĕш статьяра кăтартнă ССР Союзĕпе Польша Республики хушшинчи государство чикки çак йĕр тăрăх каять:

Сан юханшывĕн пуçламăшĕнчен кăнтăр-хĕвеланăç еннерехре вăтамран 0,6 километрта ларакан пунктран тытăнса Сан юханшывĕ пуçланнă çĕрелле çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле, малалла вара Сан юханшывĕ варрипе Солин ятлă халăх пурăнакан пунктран кăнтăр еннерехри вырăна çитиччен,

Малалла Перемышльрен хĕвелтухăç еннерехре, Рава-Русскаяран хĕвеланăç еннерехре Солоки юханшывĕ патне çитиччен, кунтан вара Солоки юханшывĕ тăрăх, Хĕвеланăç Буг юханшывĕ тăрăх, Немиров—Яловка еннелле, Беловежски Пущăн 1-мĕш статьяра кăтартнă пайне Польша енне хăварса, кунтан вара Литва ССР-ĕн, Польша Республикин тата Хĕвелтухăç Пруссин чиккисем пĕрлешнĕ вырăна çитиччен, Гродно хулине ССР Союзĕ енне хăварса тăсăлса каять.

Çак статьяра кăтартнă чикĕсене вырăнта палăртассине Совет Союзĕпе Польшăн Хутăш Комиссийĕ туса иртterет. Унăн ларăвĕ ĕç вырăнĕ Варшавăра пулать. Хутăш Комисси Договора çирĕплетни çинчен калакан грамотăсене пĕр-пĕринпе улăштарса илнĕ хыççăн 15 кунран кая юлмасăр ĕçе тытăнать.

3-МĔШ СТАТЬЯ

Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнчи территори ыйтăвĕсене мир тунă чухне татăклăн палăртиччен Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ кунта, Берлинри Конференцин решенийĕ тăрăх, Данциг бухтин хĕвелтухăç сыранĕнчен—хушса кĕртнĕ картăра палăртнă вырăнтан пуçласа хĕвелтухăçнелле—Браунсбергпа Гольдапран çурçĕртерехре, Договорăн 2-мĕш статьинче каласа пана чикĕпе пĕрлешиччен тăсăлса выртать.

4-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Договора май килнĕ таран кĕске вăхăтра çирĕплетмелле. Договора çирĕплетни çинчен калакан грамотăсене пĕр-пĕринпе улăштарса илнĕ хыççăн вăл законлă пулать. Грамотăсене Варшава хулинче улăштарса илмелле.

Договора Мускав хулинче 1945 çулхи августăн 16-мĕшĕнче икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата полякла çырнă. Икĕ текст та пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ хушнипе **В. МОЛОТОВ.**

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ хушнипе **Э. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.**

Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Польша Республикин Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви тунă
КИЛĔШӲ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви тата Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви, —

Германи çарĕсем Совет Союзĕпе Польша территорийĕсем çине çĕмĕрсе кĕни тата Германи çарĕсем Польшăна пĕтĕмпех, Совет Союзĕн территорийĕн чылай пысăк пайне вăхăтлăха оккупацилени Совет Союзĕпе Польша Республикине питĕ пысăк сиен кӳрсе хăварнине, нумай хуласене, промышленность предприятийĕсене, чугун çулсене тата халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсене пĕтĕмпех ишĕлтерсе хăварнине шута илсе, çавсене юсаса ура çине тăратас тесен, Совет халăхĕпе Польша халăхĕн чылай вăхăт хушши нумай вăй хурса ĕçлеме тивнине шута илсе,

Германи оккупацийĕ кӳнĕ çав йывăр сурансене тӳрлетес енĕпе тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕр-пĕрне пур енчен те пулăшу парса пыма тăрăшса,

çакăн çинчен калаçса татăлнă:

1-МĔШ СТАТЬЯ

Берлинри Конференцире тунă хăйĕн заявленийĕпе килĕшӳ терсе, Совет Правительстви Германин Польшăри пĕтĕм хурлăхне тата ытти тĕрлĕ активсене Польшăна парать, çавăн пекех тата Польшăн пĕтĕм территорийĕнчи Германин промышленность тата транспорт предприятийĕсен активĕсене те Польша аллине парать, ку шута Германин Польша аллине куçакан территорийĕнчи пурлăхсем те кĕреççĕ.

2-МĔШ СТАТЬЯ

Берлинри Конференци Германирен вăрçă тăкакĕсене шыраса илесси çинчен йышăннă решенипе килĕштерсе, Совет Правительстви Польша шыракан тăкаксене тивĕçтерес тесе, Совет Союзĕ вăрçă тăкакĕсене шыраса илнĕ хăйĕн пайĕнчен Польшăна çаксене парать:

а) Совет Союзĕ хăй оккупациленĕ зонăсенчен Берлинри Конференци хыççăнхи тапхăрта шыраса илнĕ мĕнпур тӳлевсен 15 процентне парать;

в) Берлинри конференцире палăртнă тăрăх, Совет Союзне Германин хĕвеланăçĕнчи зонисенчен килекен усă курма юрăхлă тата комплектлă промышленность оборудованийĕн 15 процентне парать, анчах ку оборудованишĕн Польшăн Совет Союзне ытти тĕрлĕ таварсем памалла;

с) Совет Союзне хĕвеланăçĕнчи зонăсенчен тӳлевсĕр килĕкен е вăрçă тăкакĕсене витес шутпа кирек епле те пулин урăх майпа килекен усă курма юрăхлă тата комплектлă оборудованин 15 процентне парать.

Польша правительстви 1946 çултан пуçласа Германие оккупацилесе тăнă мĕнпур вăхăт тăршшĕнче Совет Союзне çулсеренех уйрăм договорта палăртнă хакпа çĕр кăмракĕ парса тăрать: малтанхи çул унăн 8 миллион тонна, ун хыççăнхи 4 çул хушшинче 13-шер миллион тонна, Германие оккупацилесе тăнин малашнехи çулĕсенче вара 12-шер миллион тонна çĕр кăмракĕ памалла.

3-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Килĕшӳ алă пуснă хыççăнах законлă пулать.

Çак Килĕшĕве Мускав хулинче 1945 çулхи августăн 16-мĕшĕнче икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата полякла çырнă. Икĕ текст та пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ хушнипе **В. МОЛОТОВ.**

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ хушнипе **Э. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.**

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви тата Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе тунă Килĕшӳ çумне хушса çырнă
ПРОТОКОЛ

ССР Союзĕн Правительстви тата Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе тунă Килĕшĕве алă пуснă чухне, Килĕшӳ çине алă пуснă енсем çакăн çинчен калаçса татăлчĕç:

Польша вăрçă тăкакĕсене витме илекен тӳлевсем, асăннă Килĕшӳн 2-мĕш статьинчи «а», «в» тата «с» пунктсенче кăтартса панăскерсем, мĕнле йышши таварсемпе пулассине, вĕсене хăш вăхăтра тата мĕнле майпа парса пырассине тĕплĕн палăртса хумашкăн Совет Союзĕпе Польшăн Хутăш Комиссине тăваççĕ. Комиссире 6 член, кашни енчен 3-шер член пулать.

Комисси ĕçĕсене енсен представителĕсем, пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх черетпе председатель пулса ертсе пыраççĕ.

1945 çулхи августăн 16-мĕшĕнче Мускав хулинче икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата полякла çырнă, вĕсем иккĕшĕ те чи тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хушнипе **В. МОЛОТОВ.**

Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви хушнипе **Э. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 17-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Августăн 17-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче совет çарĕсем малтанхи участоксенчех çапăçнă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФРОНТ çарĕсем **БОЛИ, НИНГУТА, ТУМЫНЬ** хулисене туртса илнĕ.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем **СУНГАРИ** шывĕн икĕ сыранĕнче çапăçса **ЦЗЯМУСЫ** хулинчен хĕвеланăç еннелле 20 километр таран малалла кайнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах **БЛАГОВЕЩЕНСКРАН** кăнтăр еннерехре фронт çарĕсем **СЫЧЖАНЬ** хулине туртса илнĕ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем **УДАНЬЧЭК, ЧИФЫН, КАЙЛУ, ТУНЛЯО, КАЙТУН, БУХЭДУ, ЧЖАЛАНЬТУНЬ** хулисене туртса илнĕ.

Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче японецсем тыткăна парăнма пуçланă. Августăн 17-мĕшĕнче кун каçиччен пирĕн çарсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 20.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырар!

ВОРОШИЛОВЕЦСЕМ ПЕК ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Мăн Улхаш ял Советне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Мăн Улхаш ялĕнчен 1936 çулта уйăрălса тухса, хăй уйрăм колхоз пулса тăнă. Çавăнтанпа пĕр улшăнмасăр кунта колхоз председателĕ пулса Н. Ежов юлташ ĕçлет. Вăл колхоза, колхозниксене пĕлсе ертсе пырать. Çавна пула Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз районри малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланса тăрать.

Ку колхоза килсен тӳрех çакна куратăн: пур çĕрте те тирпейлĕх, йĕркелĕх.

Çĕрĕçне хăй вăхăтĕнче, пысăк пахалăхпа тунипе тата агротехника ыйтнисене пурне те тĕплĕн пурнăçласа пынине пула кăçал ыраш та, çуртырисем те вăйлă пулчĕç. Ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăш кăçал пĕлтĕрхинчен те ытларах пуласси куç умĕнчех.

Колхоз уйри вăйлă тырпула пухса кĕртме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнĕ.

Ыраш вырма колхоз августăн 8-мĕшĕнче тухрĕ. Тырă вырнă çĕре ĕç планĕпе пăхнă 106 çын пурте тухаççĕ. Вĕсем ирпе ирех тухса, тĕттĕм пуличчен ĕçлеççĕ. Нормăна тултарман çын çукпа пĕрех. Нумай колхозницăсем çурлапа тырă вырнă çĕрте кулленхи нормăна 130—150 процентран кая мар тултарса пыраççĕ. Кĕлте çыхнă çĕрте те А. Гулящева, Ф. Алюдинова колхозницăсем нормăна 150 процент тата ытларах та тултарса пыраççĕ. Жнейкăпа выракан Е. Булыгин колхозник те паха тĕслĕхсем кăтартать.

Колхоз вырма тухнă хыççăн 8-мĕш кунĕнче кĕлте кӳрсе авăн çапма тытăнчĕ. Ыраша вырса пĕтерне.

Авăн çапма колхозăн хăйĕн двигатель тата молотилка пур, вĕсем юсавлă. Августăн 13-мĕшĕнчен пуçласа авăн çапас ĕç пуçланчĕ. Кĕлте кӳрес ĕç вĕçленсе пырать. Кĕлтене тӳрех итем çине çапма турттараççĕ. 1945 çулта колхозăн 187 центнер тĕп тырă государствăна памалла, вăл шутран 49 центнер панă та ĕнтĕ. Кунта кĕрхи тырăсене те пикенсех акаççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Тырă вырас ĕç хĕрӳллĕн пырать

Шупашкар районĕнчи Шуркка ял Советĕнчи «Победа» колхозра ыраш вырас ĕç ăнăçлă пырать. Кашни колхозникпа колхозница уйрăм участоксенче ăмăртса ĕçленине пула кунта ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. 1-мĕш бригадăри Мария Жирнова, Матрена Федотова, Федосия Григорьева юлташсем кулленхи нормăна 140 процент тултараççĕ. Александра Трифонова, Агния Федорова, Мария Павлова, Анастасия Иванова колхозницăсем вĕсенчен те тухăçлăрах ĕçлеççĕ, вĕсем кулленхи нормăна 150—180 процент таран тултараççĕ.

Халĕ колхозра авăн çапас тата ыраш акас ĕç ăнăçлă пырать.

Л. ФЕДОРОВ.

Артистсем—колхозсенче

Чăвашсен государство академи театрĕн Калинино филиалĕнчи артистсем икĕ бригадăна уйăрălса республикăри колхозсене концертсем кăтартма тухса кайрĕç. 1-мĕш бригада—Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Етĕрне, Сĕнтĕр тата Муркаш районĕсенче; 2-мĕш бригада—Калинино, Красноармейски, Çĕрпӳ, Октябрьски, Тăвай, Вăрмар тата Канаш районĕсенче пулать.

Театр артисчĕсене колхозниксем ырă кăмăлпа йышăнаççĕ. Уйра кун каçа ĕçленĕ хыççăн вăхăта савăнăçлă та культурăллă ирттерни колхозниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерме май парать. Куракансене уйрăмах Т. Соловьев, В. Михайлова, Н. Петрова артистсем пысăк пултарулăхпа юрласа пани кăмăла каять. Баян калакан Миронов тата сĕрме купăс калакан Самарин артистсем те чăваш халăх юррисемпе ташшисене пысăк ăсталăхпа калаççĕ.

Театр коллективĕнчи комсомолецсемпе коммунистсем колхозсенчи агитаци ĕçне лайăхлатма тата стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларма пулăшаççĕ.

Театр гастролĕ колхозсенче сентябрь уйăхĕ пĕтичченех пулать.

Н. КУЗЬМИН.

Вут-кăвар гаран сыхланаççĕ

Первомайски районри «Путь Ленина» колхозра пушарпа хирĕç кĕрешекен дружинăра 10 çын тăрать, вĕсене П. Ключников ертсе пырать. Дружина членĕсем çĕмĕрĕлсе ларакан насоса, пичкесене юсаса лартрĕç тата çĕнĕ пичкесем турĕç. Пушар сарайĕ патĕнче дружина членĕсем черетпе хурал тăраççĕ. Дружина икĕ эрнере пĕрре, мăрйесене тĕрĕслесе тăрать.

38 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ

ЕЛЧĔК, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем пурĕ 10.050 гектар ытла ыраш вырнă. «Осоавиахим», «Красный воин», «Марс», «КИМ», Ворошилов, Ленин, Пушкин, Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсем, пурĕ 38 колхоз, ыраш вырса пĕтерчĕç. Халĕ 41 колхозра çуртырри выраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тулă выраççĕ. «Осоавиахим» колхозра 21 гектар пăрça çулса пĕтернĕ, халĕ ăна çапаççĕ.

Кăçал халиччен кая юлса пынă «КИМ» колхоз (председателĕ С. Измин юлташ) тырă вырса пухас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл ыраш вырас ĕçре районра малта пычĕ. Кунта колхозниксемпе колхозницăсем уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Кăнтăрла та, çĕрле те хиртен çын татăлмасть. Хăçан каннине тата апатланнине те пĕлме çук. Уяр тăнă вăхăтра машина, çава сасси уйхирте янраса тăрать. Ялта хуралçăсемсĕр тата ĕçлеме пултарайман ват çынсемсĕр пуçне никама та курма çук. Ултă ĕç кунĕнче ыраш вырса пĕтерчĕç. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем ĕçре калама çук лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Митрофан Баранов, Отечественнăй аслă вăрçă участникĕ, Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăнсан тепĕр куннех ыраш вырма тухрĕ. Вăл ĕçри стахановец кăна мар, чи лайăх агитатор та пулса тăрать.

— Эпир Тăван çĕршывшăн хамăрăн пĕтĕм вăй-хала, пурнăçăмăра шеллемесĕр çапăçса Çĕнтерӳ турăмăр, халĕ Германие çапса аркатнă хыççăн, унăн тусне, çăткăн та тискер тăшмана—Япони агрессорне аркатнă чух вăя шеллесе ĕçлеме пултараймастпăр. Тырпул вăл—хĕçпăшал пулса тăрать,—тет Баранов юлташ. Хăй вăл кулленхи нормăна çурлапа вырса 150 процентран кая тултармасть. Баранов юлташăн кăкăрĕ çинче «Красная звезда» орденĕ, «За отвагу», «За боевые заслуги» медальсем ялтăртатса тăраççĕ. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем унпа ăмăртса ĕçлеççĕ. О. Рыбкина тата ыттисем те кулленхи нормăна 170—200 процент тултараççĕ. 4-мĕш класра вĕренекен Лиза Зайцева кашни кунах çурлапа 0,17 гектар вырать.

Жнейкăпа А. Пыркин тата К. Рыбкин юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем те кашни кунах хăйсен кулленхи нормине 120—150 процент тултараççĕ.

Кунта агитаторсем хирте ĕçлеççĕ. Ялтан хаçат вуласа пама хирте вăхăтлăха тухакан агитаторсем çук. Хирте тар юхтарса ĕçлекенсем хăйсемех хаçат вуласа параççĕ, радиопа илтнĕ хыпарсене пĕлтереççĕ.

«КИМ» колхоз кашни кунах государствăна 17 лавпа 60 центнер тырă леçет. Халĕ кунта ыраш акаççĕ, авăн çапаççĕ тата çуртыррисене выраççĕ.

Крупская ячĕпе тăракан колхозра та ĕç лайăх пырать. Кунта та çумăр тесе тăман, кунĕн-çĕрĕн хирте ыраш вырнă. Ыраш акмалли вырăна çĕртме тунă чухне 2000 лав ытла тислĕк тăкнă, икĕ хут сухаласа çийĕнчех сӳрелесе çемçетнĕ. Халĕ 6 сеялкăпа ыраш акаççĕ. Августăн 20-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерме шутлаççĕ.

«Журавлевка» колхозра ĕнер хиртех митинг пулса иртрĕ. Митингра Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕ В. Немцев юлташ Япони самурайĕсене хирĕç пыракан вăрçă çинчен каларĕ. Япони агрессорĕсене тĕппипех аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлпа, колхозниксемпе колхозницăсем август уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле государствăна тĕштырă парса татма йышăнчĕç. Çав кунах çĕнĕ тырра 15 лав тиесе хĕрлĕ обоз ячĕç.

Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз государствăна кăçалхи тырра çапса 90 центнер панă.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Кашни гектарта 150 килограмм тăкканланса юлать

ИШЛЕЙ. августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан «МОПР», «Большевик», «Новое Марково», «Правда», «Партизан», «Верный путь» колхозсем паян-ыран ыраш вырса пĕтереççĕ. Çак колхозсенче кăнтăрла та çĕрле те, уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, çавна май ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. «МОПР» колхозра машиновед Андрей Петров кашни кунах 8 гектар ыраш вырать. Буденный ячĕпе тăракан колхозра Евдокия Пудова, Пелагея Смирнова тата Христиния Смирнова кулленех çавапа 0,30—0,40 гектар çулаççĕ. Ольга Плотникова, Фекла Трофимова, Екатерина Семенова çурлапа 0,20 гектар выраççĕ. Кунта ирхине кăвак çутăпа тухаççĕ те каçхине тĕттĕм пулсан тин таврăнаççĕ. Çамрăксем час-часах çĕрле те тырă вырма каяççĕ.

Анчах та районра ыраш вырасси çителĕксĕр пырать-ха. Район паянхи кун тĕлне ыраш вырмалли плана пурĕ те 19 процент кăна тултарнă. «Броневик» колхозра тырра ытла та тăккаласа выраççĕ. Кунта кашни тăваткал метрта 46 пучах выртса юлать. «Ыраш» колхозра юсавлă машина пур пулин те алăпа выраççĕ. Колхоз председателĕ Кульков юлташ: машинăпа вырсан тырă тăккаланать, тет. Çав вăхăтрах алăпа выракансем тăккаласа вырнине курмасть. Кунта шутласа пăхнă тăрăх, кашни гектарта 150 килограмм тырă тăкканланса юлать.

Калинин ячĕпе тăракан колхозăн 177 гектар ыраш вырмалла, пĕр эрнере кунта пурĕ те 18 гектар кăна вырнă. Кунта ушкăнпа ĕçлеççĕ, ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен ир кĕреççĕ. Машинăсемпе пачах усă курмаççĕ. Колхоз председателĕ Ильин юлташ ĕçе организацилесси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмасть. ВКП(б) райкомĕпе райисполком уполномоченнăйĕ Петров юлташ та çак çитменлĕхсене курман, вăл хăйĕн вăхăтне ытларах туйра сӳресе ирттернĕ.

«Чантăр» колхозра августăн 15-мĕшĕнче уя 100 çын ĕçлеме тухнă. Анчах та вĕсем пурĕ те пĕр гектар кăна вырнă.

В. ГУСЬКОВ.

Пучах пуçтараççĕ

СОВЕТСКОЕ. Пионерсемпе шкул ачисем тырпул пухса кĕртес ĕçе хастарлăн хутшăнаççĕ. Нумай ачасем тырă вырнă çĕрте звеносенчи вулавçăсем пулса ĕçлеççĕ, уйри çĕмелсене выльăх-чĕрлĕхсем сиенлесрен сыхлаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче пучах пуçтарма пионерсемпе шкул ачисенчен отрядсем организациленĕ. Мăн Чураш ял Советĕнчи «Комбайн» колхозра Н. Орлова учительница ертсе пыракан отряд 35 гектар çинче пучах пуçтарса колхоза панă. Тури Ачакри Буденный ячĕпе тăракан колхозра та 32 ача 19 гектар çинчен пучах пухнă. Ку ĕç районри ытти колхозсенче те аван пырать.

Р. СЕМЕНОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Кантăр пусине вăхăтра татса шыва хутар

Пуса сӳсĕнчен арланă çипрен хуçалăхра кирлĕ пир-авăр, михĕ-шăналăксем тата ытти япаласем хатĕрлеççĕ. Пирĕн республикăри 25 районра кантăр акаççĕ. Анчах та юлашки çулсенче кантăрпа пусана татас ĕç çине чылай колхозсен руководителĕсем иккĕмĕш черетри ĕç çинe пăхнă пек пăхаççĕ. Кантăр ытларах акакан районсен шутне Елчĕк, Элĕк, Муркаш, Сĕнтĕр, Советски, Красноармейски, Калинино, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсем кĕреççĕ. Кантăр акакан колхозсем умĕнче халĕ, ытти ĕçсемпе пĕрлех, пуса татса пĕтерес тата пусана шыва хутас е сарса çемçетес ыйту тăрать. Ку енĕпе Красноармейски, Муркаш, Шăхасан, Чурачăк, Калинино районĕсем малта пыраççĕ, вĕсем пуса татса пĕтернĕпе пĕрех. Анчах та Элĕк, Йĕпрес, Канаш, Сĕнтĕр, Чкаловски, Тăвай районĕсем ку ĕçе пĕр сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ. Элĕк районĕнче 543, гектар, Сĕнтĕр районĕнче 451 гектар, Чкаловски районра 217 гектар, Елчĕк районĕнче 440 гектар пуса татмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, пуса татнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене пуса татнă чухне тунă ĕçкунĕсем çине валеçсе паманиххăн татнă пусан 30 процентне уйăрма колхозсене ирĕк панă. Ĕçкунĕсем тăрăх пуса валеçессине ăна пухса илнĕ хыççăн çийĕнчех туса ирттермелле.

Пуса татас ĕçе кашни колхозрах тата халех вĕçлемелле. Ку ĕçе техникăллă культурăсене пăхса çитĕнтерекен бригадăсем е звеносем тумалла.

Паллă ĕнтĕ, пусана татса типпĕтнĕ тата тăррине çапса тасатнă хыççăн, шыва хутмалла е çĕр çине сармалла. Ку ĕçе те кая хăвармалла мар, халех тумалла.

СТАЛИНЛА АВИАЦИ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂРА

Н. ШИМАНОВ
Авиаци генерал-полковникĕ

Отечественнăй вăрçăра совет халăхĕ историллĕ аслă çĕнтерӳ турĕ. Çак çĕнтерĕве тунă çĕрте сталинла мухтавлă авиаци питĕ пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Хамăрăн советлă таса Тăван çĕршывăн ылхă вăрçăра «пирĕн летчиксем çав тери пысăк хăюлăх, паттăрлăхпа хастарлăх кăтартрĕç, командирсемпе начальниксем—сывлăшри операцисене ертсе пырас тĕлĕшпе пĕлӳлĕх тата вăрçă мастерлăхĕ кăтартса пачĕç» (Сталин).

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет авиацийĕ питĕ нумай тĕрлĕ задачăсене пурнăçа кĕртсе пычĕ. Вăл ытти тĕрлĕ çарсемпе таччăн пĕтĕçсе вăрçăра тăшманăн оборонине аркатрĕ, тăшманăн вут-хĕм точкисене путлантарчĕ, унăн танкĕсене, пехотине тата резервисене хирĕç кĕрешрĕ, тăшманăн тылри çар тата промышленность объекчĕсене çĕрĕн-кунĕн тапăнса бомбăсем пăрахрĕ, нимĕç авиацийĕ тапăнассинчен хамăрăн çĕр çинчи çарсене сыхларĕ, наступлени вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пулăшса пычĕ. Çак задачăсене пурне те совет летчикĕсем хăйсене шеллемесĕр тата пĕлсе пурнăçа кĕртсе пычĕç.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсем хушшинче пирĕн авиацин хаяр тĕрĕслевре пулма тиврĕ. Ку паллах ĕнтĕ. Вăрçă пуçланнă чухне нимĕçсен самолетсем пирĕннинчен ытларах пулнă. Нимĕçсем Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнса, пирĕн çĕршыва хирĕç çав тери нумай самолетсем кăларса ячĕç. Çакна палăртсан та çителĕклĕ: ун чухне Германин 5 сывлăш флочĕ пулнă. Вăл шутран 4 флочĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче пулнă. Кунсăр пуçне, гитлерла Германин авиацийĕ çумне финсен, венгерсен, румынсен тата итальянецсен авиацийĕ хутшăнни те ăна чылай вăйлăлатнă.

Тăшман авиацийĕ хисеп енчен вăйлăрах пулнă пулин те, совет летчикĕсем тăшмана хирĕç хаяррăн хирĕç тăнă, ăна йывăр çухатусем кӳнĕ. Пирĕн Главнăй Командовани,-хăйĕн аллинчи вăйĕсемпе питĕ ăста маневрсем туса, фронтăн татăклă участокĕсенче сывлăшра мала тухмалла турĕ. Çапла, сăмахран, Мускав сывăхĕнчи историллĕ çапăçура сталинла соколсем хăйсен паттăрлăхне тата пысăк мастерлăхне уйрăмах уçăмлăн кăтартса пачĕç, кунта совет авиацийĕ самолетсен хисепĕ енчен тăшманран икĕ хута яхăн ытларах пулнă. Çакă ĕнтĕ тăшман авиацине çапăçу хирĕнчен хĕссе кăларма, ăна çав тери пысăк çухатусем кӳме май пачĕ. Çакна пула вара тăшман авиацийĕ совет çарĕсен контрнаступленине чарма пултараймарĕ. Мускавшăн пулса иртнĕ çапăçура нимĕçсем Германи çарне çĕнтерекенни никам та çук текен мухтанчăклă юмаха пĕтерсе лартнă.

Сталинградри паллă çапăçу пирĕн авиаци историне мухтавлă страницăпа кĕрсе юлать. Сывлăшри çапăçусенче кăна кунта тăшманăн 500 ытла самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, тăшманăн нумай самолечĕсене аэродромсенчех пĕтерсе тăкнă тата зенитлăй артиллери персе ӳкернĕ.

Сталинграда хӳтĕлессишĕн пынă хаяр çапăçусенче тăшманăн вăйне чылай пĕтерсе тăкнă хыççăн, совет çарĕсем 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче татăклă наступлениe куçрĕç те тăшманăн 330 пин çынлă çарне хупăрласа илчĕç. Совет авиацийĕ массăллăн пыра-пыра çапса, тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине Германин ытти çарĕсенчен тĕппипех уйăрма пулăшрĕ, ăна аркатса тăкассине хăвăртлатрĕ.

1943 çулта çуркунне Кубань таврашĕнче сывлăшра вăйлă та хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Башни кунах сывлăшра 100 е ытларах çапăçу пулса иртнĕ. Çак çапăçусенче совет летчикĕсем тăшмана яланах çĕнтернĕ. 1943 çулхи июль уйăхĕнче пирĕн авиаци Курск сывăхĕнчи участокра сывлăшри çапăçусенче пысăк çĕнтерӳ турĕ те Хĕрлĕ Çарăн наступленине пулăшу пачĕ. Орел, Белгород, Харьков хулисемшĕн пулнă çапăçусенче, Донбасра, Днепр шывĕн сулахай çыранĕнчи Украинăра сталинла соколсем тăшмана ывăнма пĕлмесĕр аркатрĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕр çинчи чаçĕсене Сурçĕр Донец, Десна, Сож, Днепр тата ытти шывсем урлă каçнă чухне пулăшса пычĕç.

1943 çулта фашистсен авиацийĕ 14 пин самолет ытла çухатнă, çакă ĕнтĕ пирĕн летчиксем вăрçă ĕçĕнче çитĕнсе ӳснине, вĕсен çапăçури мастерлăхĕ вăйланнине кăтартса парать. Çак мастерлăха пирĕн летчиксем 1944 çулхи сывлăшри çапăçусенче уйрăмах уçăмлăн кăтартса пачĕç. Ун чухне нимĕçсен фашистла çарĕсене Германи чиккисем патне хăваласа çитернĕччĕ. Совет летчикĕсем тӳпе хуçисем пулса тăчĕç. Вĕсем тăшмана сывлăшра та, çĕр çинче те аркатса пычĕç. Нимĕç авиацийĕ чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те çав тери пысăк çухатусем тӳсрĕ.

1945 çулта çуркунне Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсем гитлерла Германие хирĕç пынă кĕрешӳвĕн историне мухтавлă çĕнĕ страницăсем çырса хучĕç. Совет авиацийĕ мĕн тери пысăк ĕç тунине çак цифрăсем кăтартса параççĕ: январьпе февраль уйăхĕсенче сывлăшра 2.000 çапăçу ытла туса ирттернĕ, тăшманăн 40 аэродромне сывлăшран пырса тапăннă. Çак вăхăт хушшинчех тăшманăн 2.500 самолетне, çĕршер танкне, пиншер автомашинине, лавĕсене тата ытти тĕрлĕ техникине пĕтерсе тăкнă. Март уйăхĕнче пирĕн самолетсем тăшман йышăннă территори çине 33.000 тонна ытла бомба пăрахнă. Совет авиацийĕ хăватлă ушкăнсене пĕрлешсе çапăçнă. Çапла Кенигсбергпа Гданьск хушшинчи пĕчĕк участокра темиçе пин самолет. Вăл шутра йывăр сывлăш карапĕсем те нумай пулнă. Кенигсберга штурмланă чухне совет летчикĕсем виçĕ талăк хушшинче сывлăшра 10.000 хут ытла вĕçсе хăпарнă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче Белоруссири 1-мĕш тата Украинăри 1-мĕш фронтсен çарĕсем фашистла Германин столици çине—Берлин çине питĕ пысăк наступлени пуçласа ячĕç. Çак наступлени те, малтанхи наступленисем пекех, авиаци массăллă пыра-пыра çапнинчен пуçланчĕ. Тăшманăн оборонине пиншер самолет татти-сыпписĕр пыра-пыра çапрĕ, совет пехотипе танкĕсен наступленине пулăшса пычĕ.

Çапăçун малтанхи кунĕ хушшинчех пирĕн сывлăш вăйĕсем 17.000 хут ытла вĕçсе хăпарчĕç.

Берлина сывлăшран хӳтĕлес тесе, нимĕçсем кунта авиацин пысăк вăйне пухнă. Берлин çывăхĕнче нимĕçсен 1000 самолет ытла пулнă. Совет Союзĕн Геройĕсем авиаци генерал-полковникĕсем Руденкăпа Красовский ертсе пыракан летчиксем нимĕçсен çак авиаци вăйне аркатса тăкрĕç те Берлин тĕлĕнчи сывлăшра чăн-чăн хуçасем пулса тăчĕç. Сталинла соколсем мĕнле паттăррăн тата ăстан çапăçнине, сăмахран, çак тĕслĕх те лайăх кăтартса парать: пирĕн пĕр авиаци чаçĕ пĕр талăк хушшинче тăшманăн 139 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет летчикĕсем пĕтĕмпе 3 миллион хут ытла вĕçсе хăпарнă, тăшмана калама çук пысăк çухату кӳнĕ. Вăрçăн виçĕ çулĕ хушшинче нимĕçсем 60.000 самолет çухатнă, унăн пысăкрах пайне сывлăшри çапăçусенче персе ӳкернĕ.

Çулсем, вуншар çулсем иртĕç, анчах та Гастелло, Талалихин, Харитонов, Здоровцев, Покрышкин, Алелюхин, Глинка, Кожедуб, Покрышев, Речкалов летчиксен тата пиншер ытти геройсен, хамăрăн Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн чаплăн çапăçнăскерсен, мухтавлă ĕçĕсене халăх ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕ.

Тăван çĕршыв хăйĕн воинĕсен мухтавлă ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Пин летчик ытла Совет Союз Геройĕн мухтавлă ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсенчен 46 çынна «Хĕрлĕ Çăлтăр» медале иккшер хут, Александр Покрышкина виçĕ хут панă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче 9 хĕрарăм-летчик Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Авиацин главнăй маршалне А. А. Новикова Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Пĕр соединени командующине Совет Союзĕн Геройне авиаци генерал-полковникне Хрюкина иккĕмĕш хут «Хĕрлĕ Çăлтăр» медалĕ парса наградăланă.

Сывлăшри вăйсен 5 соединенин командующийĕсене—авиаци генерал-полковникĕсене Горюнова, Красовские, Папивина, Руденкăна тата Судеца Совет Союз Геройĕн ячĕсене панă.

Лайăх çапăçнăшăн Хĕрлĕ Çарăн авиаци чаçĕсене Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн приказĕсенче 318 хут асăннă. Мĕнпур боевой авиаци чаçĕсенчен 30 процентне ытла гвардейски чаçсем тунă. 60 процентне яхăн Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăланă тата, вĕсем тунă çĕнтерӳсене ĕмĕр-ĕмĕр палăртас тесе, вĕсене мухтавлă уйрăм ятсем панă.

Ленин—Сталин партийĕ çитĕнтернĕ совет авиацийĕ хăйне Тăван çĕршыв шанса панă ĕçе тӳрре кăларчĕ, гитлерла Германие аркатса тăкас ĕçре çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрса паллă çитĕнӳсем турĕ.

Совет авиацине çакăн пек никам çĕнтерейми вăй пулса тăма тата çакăн пек пысăк çитĕнӳсем тума мĕн май пачĕ-ха?

Чи малтанах, совет халăхĕ большевиксен партийĕн ăслă та малашнехине курма пултаракан политикине пула вăрçăччене питĕ лайăх хăватлă авиаци промышленноçĕ туса хучĕ. Çак промышленность ĕнтĕ фронта çителĕклĕ таранах самолетсем туса пама пултарчĕ. Эпир тăшманран хисеп енĕпе кăна мар, пахалăх енĕпе те иртсе кайрăмăр.

Анчах та çапăçу ăнăçлăхне çынсем, питĕ паха боевой техникăна, сывлăшри çапăçусен пысăк искусствине алла илнĕ çынсем татса параççĕ. Вăрçăччен чылай малтан Сталин юлташ паттăр совет летчикĕсен хăватлă çарне, хамăрăн советлă Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăннăскерсен тата вĕçев мастерлăхне алла илнĕскерсен пысăк çарне воспитани парса çитĕнтерчĕ. Сталин юлташ авиаци командирĕсен çав тери пултаруллă кадрĕсене çитĕнтерчĕ. Çав командирсем авиаци чаçĕсен боевой ĕçĕсене ăста ертсе пынисĕр пуçне, тата çĕнĕ çынсене, сталинла соколсен çĕнĕ кадрĕсене пĕлсе вĕрентсе хатĕрлеме пултараççĕ.

Вăрçă пуçланнă вăхăта совет авиацийĕн сталинла тĕрĕс вĕрентӳ, сывлăш-çар вăйĕсемпе усă курмалли чи малти вырăнта тăракан сталинла принципсем пулнă.

Авиацин чи тĕп задачи çĕр çинчи çарсене пулăшасси пулнă. Сталин юлташ сывлăш-çар вăйĕсен организацилле тытăмне тата вĕсене техника тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарассине çак принципа пăхăнтарса тунă.

Сталин юлташ вĕрентсе хатĕрленĕ самолет, мотор, авиаци хĕçпăшалĕ тăвакан конструкторсен мухтавлă ушкăнĕ—Ильюшин, Яковлев, Лавочкин, Микоян, Сухой, Туполев, Петляков, Никулин, Швецов, Климов, Шпитальный, Березин, Волков, Ярцев, Нудельман, Суранов тата ыттисем те—вăрçă вăхăтĕнче фронта питĕ паха çĕнĕ машинăсем, çав тери лайăх хĕçпăшалланнă машинăсем туса пачĕç. Çĕнĕ йышши кашни самолет, мотор çурални е авиаци хĕçпăшалĕн çĕнĕ конструкцине туни Сталин юлташăн ячĕпе çав тери тачă çыхăнса тăрать.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн авиаци промышленноçĕ самолетсем туса кăларассине питĕ нумай ӳстерчĕ, моторсен хăватлăхне самай пысăклатрĕ, самолетсен вĕçеври пахалăхне лайăхлатрĕ, вĕсене хĕçпăшаллантарса чылай вăйлăлатрĕ. Пирĕн заводсем кĕске вăхăтрах чи çĕнĕ йышши самолетсем туса кăларма тытăнчĕç.

Пирĕн Тăван çĕршыв самолетсемпе моторсем тăвакансен мухтавлă ĕçне те тивĕçлипе хакларĕ. Нумай авиаци завочĕсем темиçе хутчен те пысăк наградăсем илме тивĕçлĕ пулчĕç. 1945 çулхи июль уйăхĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕ боевой самолетсемпе моторсем туса кăларас тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçленĕшĕн 13 чи лайăх авиаци заводне орденсем парса наградăларĕ. Авиаци заводĕнче ĕçлекен рабочисене, инженерсене, парти работникĕсене тата конструкторсене 4.500 çынна яхăн орденсемпе медальсем панă.

Авиаци вăл—совет халăхĕн юратакан ывăлĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче совет çыннисем Хĕрлĕ Çарăн тата Сывлăш-Çар флочĕн боевой вăй-хăватне ӳстерес тесе нимĕне те шеллесе тăмарĕç. Тамбов облаçĕпе Саратов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе çĕршывра самолетсем, танксем тата Хĕрлĕ Çар валли ытти тĕрлĕ хĕçпăшал тума укçа-тенкĕ пухасси анлăн сарăлса кайрĕ. Самолет тума 100.000 тенкĕ хывнă Ферапонт Головатыйăн пуçарăвне совет çыннисем çав тери хĕрӳллĕн ырларĕç. Рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем, тĕрлĕ профессири çынсем хăйсен укçи-тенкине Хĕрлĕ Çара пулăшмалли фонда, самолетсем тума хыврĕç. Верховный Главнокомандующи патне янă çырусенче совет çыннисем Тăван çĕршыва çав тери юратнине каласа парса, аслă Сталин умĕнче тăшмана çĕнтерес тесе мĕн кирлине пурне те туса пымашкăн сăмах пачĕç.

Ĕçсыннисен кăмăлне кура вĕсен укçипе илнĕ самолетсене нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса чапа тухнă чи лайăх летчиксемпе авиаци чаçĕсене панă.

1943—45 çулсем хушшинче ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен чаçĕсене 2.500 самолет ытла илсе панă.

Сталинла авиаци кунĕ вăл—пирĕн çĕршывра чи паллă халăх уявĕсенчен пĕри-йĕ пулса тăрать. Кăçал Сталинла Авиацин Пĕтĕм Союзри Кунне эпир пирĕн тĕрĕс ĕçĕн аслă çĕнтерĕвĕ вăхăтĕнче уявлатпăр. Гитлерла Германие çĕнтернĕ, ăна пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Совет халăхĕ хăйĕн Тăван çĕршывне фашистла нимĕç захватчикĕсем чуралантарасранчен сыхласа хăварчĕ. Вăл Европа цивилизацине çăлса хăварчĕ. Совет халăхĕ гитлерла Германие аркатса тăкрĕ. Совет халăхĕ хăйĕн аслă союзникĕсемпе пĕрле Инçетри Хĕвелтухăçĕнче те агрессин вучахне ăнăçлăн пĕтерсе хучĕ. Империализмла Японин пĕр сăмахсăрах парăнчĕ. Пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăх ĕçĕ çĕнеле тухрĕ.

Çакăнпа ĕнтĕ халăхсен миршĕн пыракан пĕтĕм тĕнчери кĕрешӳвĕн историне мухтавлă çĕнĕ страница çырса хунă.

Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе господин Мускавран тухса кайни

Августăн 16-мĕшĕнче Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ван Ши-цзе господин тата унпа пĕрле килнĕ Сюн Ши-хой господин, адмирал Шен Хун-ле, Сян Ча-чжао господин, Пу Даумин господин, Лю Кай господин тата ыттисем те Мускавран тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра каякансене çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров, Мускав Совет Председателĕн Заместителĕ М. А. Яснов, Мускав хулин Коменданчĕ генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Наркоминделĕн 1-мĕш Инçетри Хĕвелтухăç отделĕн Заведующийĕ Г. И. Тункин, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин, çавăн пекех Китай республикин Совет Союзĕнчи посольствинче ĕçлекенсем тата вĕсене ертсе пынă посол Фу Бин-чан господин.

Аэродрома Китай тата Совет ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конгресĕн членĕсем Мускава килни

Августăн 15-мĕшĕнче Мускава Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Конгресс членĕсен ушкăнĕ килнĕ. Вĕсене Уикерш господин пуç пулса ертсе пырать.

Центральнăй аэродромра вĕсене ВОКС правленийĕн председателĕ В. С. Кеменов, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посольствин советникĕ Кеннан тата ыттисем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Совет Союзĕн Вашингтонри посольствинче пулса иртнĕ йышăну

ВАШИНГТОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Посольствинче Совет профсоюзĕсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çӳрекен делегацийĕ ячĕпе йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура производствăллă профсоюзсен конгресĕн (КПП) хăшпĕр паллă деятелĕсем пулнă, сăмахран—КПП председателĕ Мэррей, КПП секретарĕ Кэри, суднăсем тăвакан рабочисен КПП-ра тăракан союзĕн председателĕ Грин тата хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен КПП-ра тăракан союзĕн секретарĕ Макдональд.

АМЕРИКĂРИ ПРОФСОЮЗСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ СОВЕТ СОЮЗНЕ КИЛЕС УМĔН

ВАШИНГТОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри производствăллă профсоюзсен Конгресĕн (КПП) председателĕ Мэррей, ВЦСПС председателĕ Кузнецов юлташ чĕннине йышăнса, çапла каланă: КПП çывăх вăхăтрах Совет Союзне официальнăй делегаци ярать, тенĕ.

«Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕнчи организациленнĕ рабочисем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес тĕлĕшпе çирĕп никĕс хывнă ĕнтĕ,—тенĕ Мэррей.—Пирĕн икĕ пысăк çĕршыври ĕçсыннисем хушшинчи туслăх нумай вăхăтлăха пыракан çирĕп мирĕн чи пысăк шанчăкĕ пулса тăрать. Çавăн пек çирĕп мир туса хума халĕ пĕтĕм тĕнчери çынсем ĕмĕтленеççĕ. Пирĕн хушăри дискусси вăхăтĕнче Совет Союзĕпе Америка профсоюзĕсен комитетне туса хума сĕнӳ панăччĕ. Çавăн пек комитет туса хурсан, унăн ларăвĕсенче вăрçă хыççăнхи тапхăрта хуçалăха юсас тĕлĕшпе пурне те интереслентерекен ыйтусене сӳтсе-явма май пулать. Çав сĕнӳ икĕ çĕршыври профсоюз организацийĕсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме çав тери пысăк пулăшу парать.

Юлашкинчен Мэррей çапла каланă: Совет делегачĕсем килни пĕр-пĕрне чи интереслентерекен информацисемпе паллаштарма май парĕ, тенĕ.

БОЛГАРИ ХАЛĂХĔ ССР СОЮЗĔПЕ БОЛГАРИ ХУШШИНЧИ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ПУÇЛАСА ЯНИНЕ САЛАМЛАТЬ

СОФИЯ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнусене çĕнĕрен пуçласа янă май Болгари хулисемпе ялĕсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Çав митингсемпе пухусенче Болгари халăхĕ хăйĕн пысăк савăнăçне палăртать тата Совет Союзне тав тăвать.

София хулинчи фабрикăсемпе учрежденисенче пысăк йышлă пухусем пулса иртнĕ. Болгари столицинче пурăнакан çынсем хăйсен правительстви йышăннă решение пĕтĕм чун-чĕререн кăмăлланине палăртаççĕ. София хулин виççĕмĕш районĕнчи граждансем хăйсен митингĕнче резолюци йышăннă. Резолюцире çапла каланă: Совет Союзĕ Болгарипе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлани Отечественнăй фронт правительстви ку таранччен тытса пынă политика тĕрĕссине çирĕплетсе парать, тенĕ.

«Полиграф» ятлă типографири рабочисем хăйсен резолюцийĕнче çапла çырнă: эпир Совет Союзне пĕтĕм чун-чĕререн ырласа тав тăватпăр. Эпир аслă Сталина тата тăванла вырăс халăхне хĕрӳллĕ салам калама ыйтатпăр. Вырăс халăхĕн ывăлĕсем пирĕн çĕршыва ирĕке кăларчĕç.

София хулинчи экономика палатинче ĕçлекен служащисем хăйсен пухăвĕнче çакăн пек резолюци йышăннă: пирĕн Отечественнăй фронтăн правительстви тепĕр пысăк çитĕнӳ тунине эпир хĕпĕртесе палăртатпăр. Совет Союзĕпе пирĕн çĕршыв хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнусене çĕнĕрен пуçласа яни пирĕн халăх Пĕрлешнĕ Нацисем енне тăрса Германие хирĕç пыракан вăрçа активлăн хутшăннине йышăнни пулса тăрать. Эпир Совет правительствине тата Совет Союзĕн çулпуçне Генералиссимуса Сталина хĕрӳллĕ салам яратпăр.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ РУМЫНИ ХУШШИНЧИ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ПУÇЛАСА ЯНИ ÇИНЧЕН РУМЫНИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕпе Румыни пĕр-пĕрин патне посланниксем ярасси çинчен пĕлтерни пирки «Скынтейя» хаçат «Çирĕп туслăхăн посланникĕсем» ятлă хăйĕн умстатьинче çапла çырнă: Совет Союзĕ йышăннă решени Румыни халăхĕ валли чи çутă пуласлăха уçса парать. Халĕ ĕнтĕ Румыни халăхне совет халăхĕнчен нимĕн те уйăрса тăмасть. Пĕр-пĕрне шанасси, гитлерла Германие хирĕç пынă пĕтĕмĕшлĕ кĕрешӳре çирĕпленнĕскер, икĕ çĕршыв хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнусене çĕнĕрен пуçласа янă май татах та ытларах тĕреклĕнĕ.

«Совет правительствин решенине,—тесе çырать «Ардялул» хаçат,—Румынири обществăллă шухăш çав тери хавасланса кĕтсе илчĕ. Çав решени вăл эпир гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳве хутшăннине, çавăн пекех тата пирĕн умма перемири çинчен тунă килĕшӳ кăларса тăратакан обязательствăсене те эпир тӳрĕ кăмăллăн пурнăçа кĕртсе пынине татăклăн йышăнни пулса тăрать». Хаçат икĕ посланнике те икĕ халăхăн таса чĕрелле представителĕсем пулма, çапла вара халăхсем хушшинчи ирĕклĕхпе тăванлăха çирĕплетес ĕçе активлăн хутшăнма сунать.

Румынири паллă публицист Михай Бенюк «Фронтул плугарилор» хаçатра статья пичетлесе кăларнă. Унта вăл çапла çырнă: «Нумай çулсем хушши Румынире ССР Союзне хирĕçле пропаганда сарса пынине, Румыни фашисчĕсемпе легионерĕсем Хĕвелтухăçĕнчи вăрă-хурахла вăрçа нумай вăхăт хушши хутшăнса пынине манма кирлĕ мар. Пирĕн хальхи лару-тăру эпир ĕлĕкрех тĕлĕкре те курма пултарайман пек лайăх пулсан, çакăншăн пирĕн чи малтанах Совет Союзне тав тумалла. Совет Союзĕ, пирĕн халăх тăшмана хирĕç вăй хурса кĕрешнине хакласа, пирĕн çине питех те тимлĕн çаврăнса пăхрĕ тата халĕ те тимлĕн пăхать. Демократи йĕркине малалла çирĕплетсе пырса, эпир хамăр çав тимлĕхе тивĕçлĕ пулнине кăтартса памалла».

«Либертатя» хаçат çапла çырнă: «Совет Союзĕпе тата ытти союзниксемпе иксĕлми туслă пулни кăна Румынине малашне телейлĕн чечекленсе пыма май парĕ», тенĕ.

ИРАН ХУЛИСЕНЧИ МАССĂЛЛĂ МИТИНГСЕМ

ТЕГЕРАН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Конституци кунĕнче, августăн 5-мĕшĕнче, Тавриз, Пехлеви, Мианэ, Маранда, Баболе хулисемпе Иранăн ытти хулисенче массăллă митингсем пулса иртнĕ. Митингра пулнисем Садр правительствине вырăнтан тухма, демократиллĕ правительство туса хума, государство аппаратне Реза-Шах агенчĕсенчен тасатма тата вĕсене суд аллине пама, ĕççĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма, тĕрлĕ йăхсемпе хансен хĕçпăшаллă отрячĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тата ытти ĕçсене туса ирттерме ыйтнă.

АРЦИШЕВСКИЙ ШАЙККИН АГЕНЧĔСЕМ ПОЛЬШĂН ИРАНРИ МИССИЙĔН ПУРЛĂХĔСЕНЕ СУТСА ПĔТЕРЕÇÇĔ

ТЕГЕРАН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Ферман» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн эмиграцире пулнă «правительствин» представителĕсем Тегеранра Польша миссийĕн тата Польшăн çар лагерĕсенчи пурлăхсене сутса пĕтереççĕ. Вĕсем çавăн пекех тата хăйсен тăван çĕршывне таврăнас текен поляксене тĕрлĕ чăрмавсем кӳреççĕ, тăван çĕршыва таврăнма шутлакан çынсене пурне те Палестинăна е ытти çĕршывсене ăсатаççĕ.

ХИГАСИКУНИ ПРИНЦА ЯПОНИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТНĂ

ЧУНЦЫН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Японири радио пĕлтернĕ тăрăх, августăн 16-мĕшĕнче ирхине Япони императорĕ Хигасикуни принца çĕнĕ кабинет тума хушнă.

ЯПОНИН ШВЕЙЦАРИРИ ÇАР АТТАШИ ХĂЙНЕ ХĂЙ ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарири радио çапла пĕлтерет: августăн 16-мĕшĕнче Японин Швейцарири çар атташи Бэрне Окамуто хăйне хăй вĕлернĕ.

САЛОНИКИ ХУЛИНЧЕ ДЕМОНСТРАЦИЕ ТУХНĂ РАБОЧИСЕНЕ ПĂШАЛСЕМПЕ ПЕНИ

ÇАВ ТИСКЕР ĔÇЕ ПРОТЕСТЛЕСЕ ПĔТĔМĔШЛĔ ЗАБАСТОВКА ПУÇЛАННĂ

АФИНЫ, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 12-мĕшĕнче Салоники хулинче армансемпе çăкăр пĕçерекен предприятисенчи забастовка пуçласа янă рабочисене, профсоюз центрĕн çурчĕ патне пухăннăскерсене, полици пăшалсемпе пенĕ. Пĕр рабочие вĕлернĕ, 10 çынна амантнă. Çав тискер ĕçе хирĕç протестлесе, августăн 13-мĕшĕнче Салоники хулинче рабочисен пĕтĕмĕшлĕ забастовки пуçланнă. Забастовкăна учрежденисемпе суту-илӳ предприятийĕсенче ĕçлекен служащисем те хутшăннă.

ГРЕЦИРИ ПОЛИТИКА ДЕЯТЕЛĔСЕМ ВУЛГАРИСĂН «УРАХЛАТСА ЙĔРКЕЛЕНĔ» ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЧЕН МĔН КАЛАÇÇĔ

АФИНЫ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Либералсен партийĕн лидерĕ Софулис хăйĕн партийĕ ячĕпе тухса каласа, çакна палăртнă: Вулгарис правительствине юлашки вăхăтра урăхлатса йĕркелени тĕрĕссипе нимĕнле улшăну та паман, çав правительство малтанхи пекех чи сылтăм правительство пулса юлать. Софулис çакна кăтартса панă: премьер хăйĕн декларацийĕнче вăл монархистсен террорне хирĕç мĕнле те пулин мера йышăнасси пирки нимĕн те каламан, тенĕ.

«Халăх тивĕçлĕхне ăнланса илни,—тенĕ малалла Софулис,—пире çине тăрсах политикăллă правительство туса хума хушать. Çав правительство халăхăн мĕнпур вăйĕсене пĕтĕçтерме тивĕçлĕ». Правительство октябрь уйăхĕнче плебисцит туса ирттерме палăртни çинчен калакан хыпарсем пирки чарăнса тăрса, Софулис çапла каланă: Вулгарис çавăн пек хăтланни вăл государствăра переворот туса хупи пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен хальхи лару-тăрура сасăлас ĕç 1935 çулхи пек те мар ултавлă пулса иртет, тенĕ.

«Либералсен партийĕ,—тенĕ Софулис,—çавăн пек плебисцитпа суйлавсене хирĕç бойкот тăвать. Либералсен партийĕ суйлавçăсен списокĕсене тумалли меслете хирĕç протестлет, çавăн пек протестлени нимĕн те памасан, либералсен партийĕ хăйсен членĕсене списоксем тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссирен кăлла чĕнсе илет».

Республиканецсен партийĕн лидерĕ Милонас çапла каланă: Вулгарисăн иккĕмĕш кабинечĕ, малтанхи кабинет пекех, влаçа мĕнпур республиканецсен кăмăлне хирĕç пырса кĕрсе ларчĕ, çав правительство «монархистсен лагерĕн правительстви» пулса тăрать, ăна республиканецсем шанмаççĕ. Тĕрĕссипе илсен, премьер хăй те хăйĕн программăллă сăмахĕнче грек халăхĕ тата политикăллă партисем ăна шанманнине йышăннă.

Республиканецсен мĕнпур хаçачĕсем Вулгарис правительствине тата премьерăн программăллă сăмахне сивĕччĕн критиклеççĕ. «Элефтерия» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла палăртнă: мĕнпур сутăнчăксем, охраниксен батальонĕнчи çынсем, уйрăм охранкăри палачсем тата ытти çавăн йышши çынсем халĕ ĕнтĕ чи сылтăмри лагерь çумне пĕрлешрĕç. Çав лагерь «çĕнĕ правительствăн» пĕртен-пĕр тĕрекĕ пулса тăрать. çавăнпа та ĕнтĕ премьер-министр хăйĕн программăллă сăмахĕнче çав преступниксене айăпласси çинчен пĕр сăмах та шарламан. «Элефтерия» хаçат çапла шутлать: Вулгарис правительстви тăван çĕршыва сутакансене хӳтĕлесе тăни Грецие пĕтĕм тĕнче умĕнче намăса кăларнă пулĕччĕ, «анчах пирĕн телее,—тенĕ хаçат,—Вулгарис пĕтĕм Грецие пĕтĕçтерекен çын пулса тăмасть».

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен Государство Академи Театрĕ çумĕнчи Театр студийĕ 1945-46 вĕренӳ çулне 1-мĕш курсра вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Студире 3 çул вĕренмелле.
Стули драма артисчĕсене вĕрентсе хатĕрлет.
Студие 16 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ лайăх сывлăхлă çынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.
1944-45 вĕренӳ çулĕнче вăтам шкултан ылттăн е кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнисен специальность тăрăх çеç экзамен памалла. Ыттисен вара чăваш тата вырăс чĕлхипе тата литературипе вăтам шкулăн программи тăрăх экзамен памалла. Вĕренме кĕрес текенсен чăваш чĕлхипе пьеса сыпăкĕсем, басньăсем, сăвăсем, калав сыпăкĕсем, этюдсем калама вĕренмелле.
Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Заявленисене директор ячĕпе çак документсемпе пĕрле ямалла: автобиографи, вăтам шкула пĕтернине кăтартакан аттестат, виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтарткан справка (ăна çара каймаллисен ямалла). врачран сывлăх çинчен илнĕ справка, хăçан çуралнине тăртакан справка. Документсене пурне те копийĕсене мар, хăйсене ярса памалла.
Паспарта пĕрле илсе пымалла.
Экзаменсем сентябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Вĕрентме сентябрĕн 17-мĕшĕнче пуçлаççĕ.
Стули студенчĕсене общежитие вырнаçтараççĕ тата стипенди параççĕ.
Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Чувашский Государственный Академический Театр, директору студии.

Шупашкарти электромеханика техникумĕ çакна пĕлтерет:

СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, техникумра кăçал сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Çакна пула техникума вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисене 1945 çулхи августăн 20 мĕшĕччен çеç илеççĕ.
Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Районри чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитрĕç. Ку ĕçре шкулсене комсомолецсемпе аслăрах классенче вĕренекенсем нумай пулăшаççĕ. Асăмçыринчи 7 çул вĕренмелли шкулта комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 35 парта, класри доскасене, алăксене юсанă, вĕсене сăрласа илемлетнĕ. Ку тĕлĕшпе кунта 13 комсомолец хастарлăн ĕçлерĕç. Юманайĕнчи вăтам шкулти комсомолецсемпе çамрăксем те хăйсен вăйĕпе 42 парта, класри доскасене, счетсене, сĕтел-пукансене юсарĕç, сăрларĕç. Ку ĕçсенче уйрăмăнах 10-мĕш класра вĕренекен Верендеев комсомолец хастар ĕçлерĕ.

Кӳльхĕрринчи 7 çул вĕренмелли шкулта пур классене те çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитерни. Кăмакасене юсанă, пурпа шуратнă, шкул таврашĕнчи тасамарлăхсене тасатнă. Физкультурниксен кунĕ тĕлне кунта физкультура площадки туса пĕтерчĕç. Унта вĕренекенсен канăç вăхăтне лайăх йĕркелеме, ăмăртусем ирттерме пулать.

Т. ЕРЕМИНА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркассинчи вăтам шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулне тăрăшса хатĕрленеççĕ. Халĕ шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шута илсе тухнă, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пухса каласнă. Шкул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе аслă классенче вĕренекенсемпе комсомолецсенчĕн ятарласа бригада организациленĕ. Çак кунсенче вăл бригада вăрмана кайса 34 кубометр вутă хатĕрлерĕ. Комсомолецсен вăйĕпе классенчи кăмакасене юсанă.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕренекенсемпе комсомолецсем те шкул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хастаррăн ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть комсомолецсем пуçарнипе 32 çамрăк вăрмана вутă хатĕрлеме кайрĕç. Вĕсем 5 кун хушши вăрмантан тухмасăр ĕçлерĕç.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—25, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕ 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ял хуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67 издательстви конторин 0—23.

НТ 00396 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, [illegible] Тираж 16.000